3434 43-29

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ

# 1943 çулта государствăн ялхуçалăх ĕçĕнчи тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне лайăхрах пурнăçа кĕртессишĕн Мари АССР-пе пыракан социализмлă ăмăртура Чăваш АССР-ĕ хăй çине илнĕ

# ОБЯЗАТЕЛЬСТВĂСЕМ

БЕСПЛАТНО

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1943

Редактор *П. Золотов.*

НТ 976. Подписано к печати 17/III-43 г. Зак. № 278.
Объем 0,75 п. л. Тираж 2.000 экз.

г. Чебоксары. Типография № Управ. полиграфпром
при СНК ЧАССР.

**Чăваш республикинчи колхозниксене, колхозницăсене, МТС-семпе совхоз-сен работникĕсене тата ялхуçалăх специалисчĕсене пурне те**

*Хаклă юлташсем!*

Гитлерăн юнлă бандисем пирĕн Тăван çĕршыв çине тапăннăранпа çулталăк та са-кăр уйăх иртрĕ ĕнтĕ. Украина, Белорус-сия, Крым, Донбасс юнпа витĕнчĕç. Анне-семпе арăмсен тата ачасен чыслăхĕ мăш-кăла лекрĕ. Çурт-йĕрсене аркатса пĕтерне. Халăхăн пуянлăхне çаратса пĕтерне, авалхи культурăн памятникĕсене мăшкăллана.

Пирĕн Совет çĕршывĕ аслă тĕрĕслӳ ви-тĕр тухать. Çапăçу хирĕсенче пирĕн Тăван çĕршывăн тата кашни çыннăн кун-çулĕ пирки ыйту татăлать. Çак вăрçăра ĕнтĕ Совет государстви пулассипе пулас марри çинчен, Совет Союзĕн халăхĕсем ирĕклĕ пуласси е вĕсем пусмăрлăха кĕрсе ӳксе чура пулса тăрасси пирки ыйту татăлать. Çак вăрçă мĕнле вĕçленнинчен пирĕн тăван

çĕршывăн тата пĕтĕм этемлĕхĕн пуласлăхĕ килет.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ нумай миллионлă совет халăхĕ отечественнăй аслă вăрçа пĕр çын пек çĕкленсе, хăйĕн юратнă Тăван çĕршывне кăкăрпа сыхлама тытăнчĕ. Хĕрлĕ Çарăн паттăр воинĕсем, аслă полководец Сталин юлташ ертсе пынипе, захватчиксен вăрă-хурахла бандине çĕмĕрсе тата пĕтерсе пыраççĕ.

Нимĕç войскисене тата гитлерла вассалсен çарĕсене Сталинград патĕнче, Дон шывĕн вăтаçĕрĕнчи районра, Çурçĕр Кавказра, Воронежран кăнтăртарахра тата хĕвеланăçнерехре çĕмĕрсе тăкни, нимĕç войскисем Великие Луки районĕнче поражени тӳсни, Ленинград блокадине татса тухни, халăх пурăнакан нумай çĕршер пунктсене тăшманран ирĕке кăларни совет çыннисен чĕрисене калама çук савăнтарать, пирĕн аслă Тăван çĕршыв хăйĕн мухтавлă воинĕсемпе савăнать. Совет воинĕсем нимĕçсен фашистла захватчикĕсене çине çинех пыра-пыра çапаççĕ. Хĕрлĕ Çар хăйĕн ялавĕсене ĕмĕр-ĕмĕр манми мухтавпа витет.

Хăйсен чаплă воинĕсемпе танлашас тесе, рабочисемпе колхозниксем, пĕтĕм совет халăхĕ, нимĕç оккупанчĕсене хăвăр трах çĕмĕрсе тăкма мĕн кирлине мухтавлă Хĕрлĕ Çара пурне те парса тăрас тесе, ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ, тылра нихăçан пулман паттăрлăх кăтартаççĕ.

Сталин юлташ çĕршывпа фронт валли ытларах та ытларах тырпул, аш-какай тата промышленность валли чĕртавар пама чĕнсе каланисене пурнăçа кĕртсе пырса, колхозлă хресченсем хăйсен вăйне шеллемесĕр ĕçлерĕç, иртнĕ ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлерĕç.

Октябрьти социализмлă аслă революци 25 çул тултарни çинчен тунă хăйĕн историллĕ докладĕнче Сталин юлташ колхозсен ĕçне тивĕçлипе хакларĕ, вăл: „Пирĕн колхозсемпе совхозсем, вăрçă вăхăтĕнчи мĕнпур йывăрлăхсене пăхмасăр ним иккĕленмелли те çук, çителĕклĕ ĕçлеççĕ“. „Пирĕн колхозсемпе совхозсем те тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесе халăхпа Хĕрлĕ Çар валли продовольстви, промышленность валли чĕртавар çителĕклĕ парса тăраççĕ,“ терĕ.

Колхоз стройĕ вăрçă испытанийĕсене

чыслăн тÿссе ирттерчĕ. Колхозсемпе совхозсем пулман пулсан, пирĕн çĕршыв ялхуçалăх умне вăрçă тапхăрĕ кăларса тăратнă йывăрлăхсене çĕнтереймен пулĕччĕ, çакна халĕ кашниех курса тăрать.

Отечественнăй аслă вăрçăн фрончĕсенче пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар ăнăçлă наступлени туни колхозлă ялта производствăллă тата политикăллă активлăхăн çĕнĕ хумне çĕклерĕ. Тамбов тата Саратов облаçĕсенчи колхозниксемпе колхозницăсем пуçарнипе, харпăрхăй перекетлесе хăварнă укçа-тенке танксен колоннисемпе самолетсен эскадрильисене тума парас тĕлĕшпе пĕтĕм çĕршывра патриотизмлă юхăм саралса кайрĕ.

Юратнă Хĕрлĕ Çарăн çапăçури хăватне ÿстерессишĕн пыракан пĕтĕм халăх движенине орденлă Чăваш республикинчи колхозниксем те хăвăрт йышăнса илчĕç. Пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсем кĕске вăхăт хушшинчех хăйсен перекетленĕ укçисене хаяр танксемпе боевой самолетсем тума 62 миллион тенкĕ ытла хыврĕç. Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе 120 пин пăт ытла тырă, нумай

аш-какай тата ытти ялхуçалăх продукчĕсем хыврĕç, çапла вара Сталин юлташран икĕ хут салам илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Саратов облаçĕнчи колхозникĕн Ферапонт Головатыйĕн патриотла пуçарăвне йышăнса илсе, пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен перекетленĕ мĕнпур укçине Хĕрлĕ Çарăн вăйхăватне ÿстерме, нимĕç оккупанчĕсене çĕмĕрсе тăкассине хăвăртлатма параççĕ. Республикăри ĕççыннисем Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз председательне Антонин Дмитриевич Васянин юлташа, Пăрачкав районĕнчи „Красный пахарь" колхоз председательне Михаил Владимирович Дубровин юлташа, Улатăр районĕнчи „Красный луч" колхоз колхозникне Андрей Михайлович Сарсков юлташа, Чкаловски районри „Маяк колхоз" председательне Зямалетдин Хусеинович Минаев юлташа, Хĕрлĕ-Чутай Районĕнчи ВКП(б) ячĕпе тăракан колхоз председательне Федот Иванович Гурьянов юлташа, Хĕрлĕ Çара хĕçпăшаллантарма хăйсем перекетленĕ укçаран 100-шер пин тенкĕ хывнăскерсене, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи „Мотор" колхозри

ферма заведующине тата парторганизаци секретарьне Александр Кириллович Тверсков юлташа, 75 пин тенкĕ хывнăскере, Пăрачкав районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз колхозникне Андрей Федорович Пугачев юлташа, танк тума 110 пин тенкĕ панăскере, Пăрачкав районĕнчи Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз колхозницине Мария Филипповна Ширманова юлташа, 50 пин тенкĕ хывнăскерне, тата республикăри малта пыракан ытти нумай юлташсене лайăх пĕлсе тăраççĕ.

Иртнĕ çулта пирĕн республикăри колхозсем, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса тырпул тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ÿстерес ĕçре чылай пысăк çитĕнÿсем турĕç. Республика ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлерĕ, государствăна тырă памалли плана тултарчĕ. Кашни гектартан вăтам шутпа 13,5 центнер тырпул туса илнĕ. Çурхи тырăсем акăнакан çĕр лаптăкне çулталăк хушшинче 16 пин гектар чухлĕ, кĕрхи тырăсем акăнакан çĕр лаптăкне 31 пин гектар чухлĕ ÿстернĕ. Нумай колхозсем иртнĕ çулта

кашни гектартан çĕршер пăт тыră туса илчĕç.

Çапла, сăмахран, Вăрнар районĕнчи Ленин орденлĕ, Сталин ячĕпе тăракан колхоз вăтам шутпа кашни гектартан 116 пăт тыră илнĕ, Шупашкар районĕнчи „Осоавиахим" колхоз—111-шер пăт, Елчĕк районĕнчи „Марс" колхоз—100-шер пăт, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Наркомюст ячĕпе тăракан колхоз кашни гектартанах 183 пăт пăрçа, Çĕрпÿ районĕнчи „Ĕмĕт" колхоз—110-шер пăт пăрçа тата 1,037-шер пăт çĕрулми туса илнĕ. Улатăр районĕнчи „Путь Ильича" колхоз кашни гектартан 165 пăт махорка туса илнĕ. Улатăр районĕнчи „Путь Ильича" колхозри Мария Яковлевна Додонова юлташăн звени гектартан 427 пăт махорка туса илнĕ. Кувакино районĕнчи „Ударник" колхозри Анна Карповна Тюрина юлташăн звени гектартан 518 пăт махорка туса илнĕ. Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозăн звеньевойĕ Елизавета Ерошина юлташ гектартан 55-шер пăт кок-сагыз тымарĕ пуçтарса илнĕ.

Колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсем

те фронтри пек ĕçлерĕç. Республикăри колхозсенче мăйракаллă шултăра выльăхсен хисепĕ çулталăк хушшинче 44,9 процент, сыснасен хисепĕ—35,5 процент, сурăхсемпе качакасен хисепĕ 78,9 процент чухлĕ ӳсрĕ. Выльăх-чĕрлĕхĕн продуктивноçĕ хăпарчĕ. Çĕрпӳ районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри доярка Таисия Драгункина юлташ 1942 çулта кашни ĕне пуçне 3.090-шар литр сĕт суса илнĕ. Сĕнтĕр районĕнчи „Çĕнĕ Юнга“ колхозри свинарка Фекла Михайловна Вазикова юлташ кашни сысна аминчен 20 çăвăр илнĕ. Комсомольски районри Шмидт ячĕпе тăракан колхоз телятницы Лидия Николаевна Бабаева юлташ хăйне çирĕплетсе панă пăрусене пурне те сыхласа хăварнă, вăл пăрусем талăкра вăтам шутпа 750 грамм чухлĕ хутшăнса пынă.

Республикăра чаплă çынсем ӳссе пырăчĕç. Çĕмĕрле МТС-ĕнчи комбайнер Иван Михайлов юлташ „Коммунар“ комбайнпа 510 гектар вырса пуçтарнă, Елчĕк МТС-чи трактористка Анна Гордеева юлташ плана 254 процент тултарнă тата 654 килограмм горючи перекетленĕ. Канаш МТС-ĕнчи

Никита Павлович Павлов юлташ ертсе пыракан тракторсен бригади плана 163 процент тултарса, 1.700 килограмм горючи перекетлесе хӑварнӑ.

Пирӗн республикӑна МТС-сен ӗҫӗн результачӗсем тӑрӑх тата колхозсенче общесвтӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес енӗпе Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне илме кандидата тӑратнӑ.

Анчах та эпир тырпул тухӑҫлӑхне ӳстерес тата выльӑх-чӗрлӗх продуктивноҫне хӑпартас тӗлӗшпе тунӑ ҫитӗнӳсем пире лӑпланса ларма сӑлтав памаҫҫӗ, эпир ҫакна лайӑх пӗлетпӗр. Фронт пирӗнтен ытларах ялхуҫалӑх продукчӗсем, промышленность—чӗртавар ыйтаҫҫӗ. Фронта пулӑшассине пирӗн кашни кунах вӑйлатса пырас пулать. Пирӗн тимлӗн ӗҫлесе, хамӑрӑн тӑван ҫӗршывӑн паттӑр воинӗсемпе танлашма тӑрӑшас пулать, ӗҫре пысӑк организованность кӑтартмалла, кӑҫалхи ялхуҫалӑх ҫулӗнче мӗнпур йывӑрлӑхсене ҫӗнтерме пӗтӗм вӑя хумалла.

Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи иккӗмӗш ҫураки ҫывхарса килет. Ҫакӑ вӑл—ялхуҫалӑх ӗҫӗнчи

чи ответлă вăхăт пулса тăрать. Çураки кăçал пĕлтĕрхинчен чылай йывăртарах условисенче пулса иртет. Çавăнпа та кашни колхозникпе колхозницăн, кашни трактористпа комбайнерăн, çĕрĕçĕнчи кашни работникăн çакна ăнланса илес пулать тата харпăрхăйĕн пĕтĕм вăйне çураки ĕçĕсене ăнăçлăн хатĕрленсе ирттерес ĕçе хурас пулать. Эпир колхозсенче ăнăçлăн ĕçленинчен çĕршывпа Хĕрлĕ Çар валли тырпул, аш-какай, пахча-çимĕç тата промышленность валли чĕртавар çителĕклĕ парса тăрасси килнине асра тытас пулать.

1943 çулта вăрçă ыйтнă пек пысăк тухăçлă тырпул туса илессишĕн колхозсен, МТС-сен, совхозсен тата районсен социализмлă ăмăртăвне организацилесси çинчен Горький облаçĕнчи ялхуçалăхĕнче малта пыракансем панă сĕнĕве ырласа, эпир мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, МТС-семпе совхозсен работникĕсене тата ялхуçалăх специалисчĕсене çак ăмăртăва анлăн хутшăнма тата çуракине хатĕрленес ĕçе вăйлăн сарса яма, çапла майпа Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă тĕле çак ĕçре татăклă

çитĕнӳсем тума тата çуракине пĕтĕмпех хатĕрленсе çитниле тухма чĕнетпĕр.

Пĕр кун та вăраха ямасăр, вăрлăхсене акма хатĕрлес пулать, вăрлăх хывас, тасатас тата унăн шăтас пахалăхне тĕрĕслес ĕçе мартăн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр вĕçлемелле. Тракторсене, пĕтĕм ялхуçалăх машинисене тата ĕç инвентарьне апрелĕн 10-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмĕшпех юсаса, хатĕрлесе çитерес пулать. Хирти ака ĕçĕнче ĕçлеме сухаçсене, акакансене, яровизаторсене тата колхозри ытти кадрсене хатĕрлемелле. Лашасене çураки валли лайăх хатĕрлесе çитермелле, çавăнпа та вăйсăр лашасене пурне те халех вăйлă апат çине тăратмалла, лашасене пăхас ĕçри обезличкăна пĕтермелле. Хăмăт-пăявсемпе транспорт инвентарĕсене малтанах юсаса хумалла. Пур колхозсенче те ĕнесемпе вăкăрсене ялхуçалăх ĕçĕнче ĕçлеме вĕрентмелле, çапла майпа лашасене хуçалăх ăшĕнчи тата транспорт ĕçĕсенчен хăтарса, вĕсемпе пуринпе те сухапа ака ĕçĕнче усă курмалла.

Вăрнар районĕнчи колхозсем хăйсен хирĕсене 120.800 лав тислĕк кăларнă тата хĕллехи вăхăтра тислĕк кăлармалли плана

тултарнă. Вĕсен примерне йышăнса илсе, колхозсенче тислĕкпе тата ытти вырăнти удобренисемпе, минераллă удобренисемпе пĕтĕмĕшпех усă курмалла тăвас пулать. Вăрçă вăхăтĕнчи тырпулшăн кĕрешсе, пур колхозсенче те малта пыракан стахановла агротехникăна анлăн ĕçе кĕртмелле, ака ĕçĕсене пурне те пысăк пахалăхпа туса ирттермелле, çавăнпа та колхозниксем хушшинче халех агротехникăллă вĕренĕве сарса ямалла тата колхозниксене çўлте асăннă мероприятисен пахалăхĕ çинчен кулленех ăнлантарса памалла.

Эпир, партипе совет тата колхоз активĕн республикăри канашлăвĕн участникĕсем, 1943 ялхуçалăх çулĕнче пирĕн колхозсем умĕнче тăракан задачăсене сўтсе явнă хыççăн, хамăр çине çакăн пек обязательствăсем илетпĕр тата колхозниксене, колхозницăсене, МТС-семпе совхозсен работникĕсене тата ялхуçалăх специалисчĕсене пурне те çав обязательствăсене пурнăçа кĕртессишĕн большевикла кĕрешме чĕнетпĕр:

Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне 1943 çулта 10 процент чухлĕ хăпартмалла.

Мӑйракаллӑ шултӑра выльӑхсен хисепне 25 процент, сыснасен хисепне 22 процент, сурӑхсемпе качакасен хисепне 21 процент чухлӗ ӳстермелле.

Тӑрантаракан кашни ӗнерен 1.200 литртан кая мар сӗт суса илмелле.

Кашни сурӑхран вӑтамран 2,5 килограмм ҫӑм касса илмелле.

100 сурӑхран сахалтан та 115 путек илмелле.

Пӗр сыснаран 12 ҫӑвӑртан кая мар илмелле.

Ӗҫлеме пултаракан кашни колхозник ҫулталӑкра 250 ӗҫкунӗнчен кая мар тумалла.

Хаклӑ юлташсем—колхозниксем, колхозницӑсем, МТС-семпе совхозсен работникӗсем, ялхуҫалӑх специалисчӗсем! Хамӑр ҫине илнӗ обязательствӑсене пурнӑҫа кӗртес тата кӑҫал нихӑҫанхи пек мар пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илес, выльӑх-чӗрлӗхсен хисепне малалла ӳстерсе пырас тата машинӑсемпе тракторсен паркӗпе лайӑх усӑ курас тесе, хамӑрӑн пӗтӗм вӑя хурса кӗрешер!

Пирӗн ҫулпуҫ тата учитель Сталин юл-

таш пире фронта пулăшассине пур майсемпе те вăйлатма, ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме, фронтпа çĕршыв валли ытларах та ытларах ялхуçалăх продукчĕсем пама чĕнет. Пирĕн чыслă ĕç—юратнă çулпуçăн наказне пурнăça кĕртесси.

Кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене лайăх туса ирттерессишĕн социализмлă ăмăртăва хутшăнăр, ăмăртура мала тухассишĕн кĕрешĕр.

Икĕ çыншăн, виçĕ çыншăн ĕçлер, нихăçанхи пек мар пысăк тухăçлă тырпул туса илер, пирĕн выльăх-чĕрлĕхсен тупăшне ӳстерер! Çапла тунипе эпир фронта калама çук пысăк пулăшу парăпăр тата нимĕçсен фашистла захватчикĕсене çĕмĕрсе тăкас ĕçе хăвăртлатăпăр.

Сывă пултăр пирĕн юратнă Тăван çĕршыв, унăн ирĕклĕхĕ, унăн никама пăхăнманлăхĕ!

Сывă пултăр халăхсен çулпуçĕ, аслă полководец Сталин юлташ!

---

# 1943 çулта государствăн ялхуçалăх ĕçĕнчи тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне лайăххрах пурнăçа кĕртессишĕн Мари АССР-пе пыракан социализмлă ăмăртура Чăваш АССР-ĕ хăй çине илнĕ

# ОБЯЗАТЕЛЬСТВĂСЕМ

«Пирĕн пĕрремĕш тĕллев — хамăрăн территорисемпе хамăрăн халăхсене нимĕçсен фашистла пусмăрĕнчен ирĕке кăларасси пулса тăрать... Анчах çакна тума пирĕн çарпа пирĕн флота хамăрăн пĕтĕм çĕршыв енчен ĕçлĕн те активлăн пулăшса пыни кирлĕ; пирĕн рабочисемпе служащисем, арçынсемпе хĕрарăмсем, предприятисенче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлени тата вĕсем фронта валли танксем, танксене хирĕç пемелли пăшалсемпе орудисем, самолетсем, тупăсем, минометсем, пулеметсем, винтовкăсем, боеприпассем ытларах та ытларах парса пыни кирлĕ; пирĕн колхозниксем, арçынсемпе хĕрарăмсем, хăйсен уйхирĕсенче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлени тата вĕсем фронтпа çĕршыв валли тырпул, аш-какай, промышленность валли чĕртавар ытларах та ытларах парса пыни кирлĕ; пирĕн пĕтĕм çĕршыв тата ССР Союзĕнчи мĕнпур халăхсем организациленсе пĕрлĕхлĕ çар лагерĕ, пирĕн çарпа тата флотпа пĕрле хамăр тăван çĕршывăн чыслăхĕшĕн, нимĕç çарĕсене çапса çĕмĕрессишĕн ирĕклĕхлĕ аслă вăрçă туса пыракан лагерь пулса тăни кирлĕ».

(И. СТАЛИН).

2. Обязательствăсем

Чăваш АССР-чи колхозниксемпе колхозницăсем, МТС-семпе совхозсен работникĕсем, Сталин юлташ фронтпа тăван çĕршыва—тырпул, аш-какай, промышленность валли чĕртавар ытларах пама чĕнсе каланипе хавхаланнăскерсем, нимĕç оккупанчĕсене хăвăртрах çапса аркатас ĕçре хамăрăн паттăр Хĕрлĕ Çара пур енĕпе те пулăшу парса тăрас шухăш-кăмăлпа çунса, 1942-мĕш ялхуçалăх çулĕнче хăйсен уйхирĕсенче вăя хĕрхенмесĕр ĕçлерĕç, колхозсене хуçалăхпа организацилĕх тĕлĕшĕнчен малалла çирĕплетсе пырас, ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстерес тата обществăллă выльăх-чĕрлĕхе ĕрчетес ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем турĕç.

Иртнĕ çулта Чăваш республикинчи колхозсем гектартан 13 центнер ытларах тырпул туса илчĕç, государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне ăнăçлăн пурнăçа кĕртрĕç, мăйракаллă шултăра выльăхсен хисепне 44,9 процент, сыснасен хисепне—35,5 процент, сурăхсемпе качакасен хисепне—78,9 процент чухлĕ ӳстерчĕç.

Машинно-тракторнăй станцисем вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене пăхмасăрах, ла-

йăхрах ĕçлерĕç тата кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа иртнĕ çултинчен 70 гектар ытларах сухаларĕç, тырпула комбайнсемпе вырса пуçтармалли плана 128 процент пурнăçа кĕртрĕç.

Анчах та тырпул тухăçлăхне ўстерес тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе тунă çитĕнўсем—вĕсем лăпланса лармалли виçе мар-ха, фронт пиртен—ялхуçалăх продукчĕсем, промышленность вара—чĕртаварсем ытларах та ытларах туса пама ыйтаççĕ.

1943 çулта государствăн ялхуçалăх ĕçĕсенчи тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне лайăхрах пурнăçа кĕртессишĕн Мари АССР-пе социализмлă ăмăртăва тухса, Чăваш АССР-чи колхозниксемпе колхозницăсем, МТС-семпе совхозсенчи работниксем тата ялхуçалăхĕнчи специалистсем хăйсем çине çак обязательствăсене илеççĕ:

1. 1943 çулта ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне 10 проц. кая мар ўстермелле.

2. Çав задачăна пурнăçа кĕртме çакăн пек мероприятисем туса ирттермелле:

а) уйхире 1 миллион та 500 пин тонна тислĕк, вăл шутран хĕллехи вăхăтра 1.000.000 тонна тислĕк кăлармалла;

б) удобрени валли 500.000 тонна торф хатĕрлесе турттарса кăлармалла;

в) 100.000 центнер кĕл хатĕрлемелле;

г) ирхи тĕштырăсене 8—10 кун хушшинче акса пĕтерелле;

д) тĕштырă культурисене 100.000 гектар çинче тата çĕрулмине 7.000 гектар çинче яровизациленĕ вăрлăхсемпе акмалла;

е) кĕрхи тырăсемпе çуртырри калчисене 25.000 гектар çинче апатлантарса хăвармалла.

3. Тракторсене, вĕсем çумне кăкарса ĕçлемелли машинăсене тата лашапа ĕçлемелли ялхуçалăх инвентарĕсене—апрелĕн 10-мĕшĕ тĕлне, комбайнсемпе молотилкăсене тата тырпул пухса кĕртмелли ытти ялхуçалăх машинисене июлĕн 10-мĕшĕ тĕлне юсаса çитермелле.

4. Государствăн тракторсемпе ĕçлемелли планне пурнăçа кĕртмелле, кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа вăтамран 360 гектар ĕçлемелле, кашни комбайнпа 110 гектар вырса пуçтармалла тата кашни трактор молотилкипе 450 тонна тĕштырă çапса пуçтармалла. Тракторсен ĕçĕн хăйне лара-

кан хакне тата горючи расходне 5 процент чухлĕ чакармалла.

5. Утăсене тырпул пухса кĕртес ĕççем пуçланиччен 10—15 кун малтан çулса пуçтармалла.

6. Кĕрхи тырăсене—10 кун хушшинче, çурхи тырăсене 15 кун хушшинче вырса тата çулса пĕтермелле.

7. Кĕлтесене капана хывас ĕçе вырма пуçланă хыççăн 5-мĕш кунĕнче тытăнмалла, вырса пĕтерсен 10 кунран кая хăвармасăр капана хывса ĕлкĕртмелле.

8. Тырпулсене вырма пуçланă хыççăн 3—5-мĕш кунĕнче авăн çапма тытăнмалла тата ноябрĕн 10-мĕшĕнчен кая юлмасăр çапса пĕтермелле.

9. Вăрлăхлăх акнă курăксене çулнă хыççăнах çийĕнчех çапма тытăнмалла, 20 кун хушшинче вара çапса пĕтермелле.

10. Кĕрхи тырăсене августăн 25-мĕшĕнчен кая юлмасăр акса пĕтермелле.

11. Государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли обязательствăсене пурне те срокчен пурнăçа кĕртмелле.

12. Государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли тата выльăх-чĕрлĕхĕн тухăçлăхне ӳс-

термелли планне кашни колхоз тăрăх уйрăмăн пурнăça кĕртмелле тата мăйракаллă шултăра выльăхсен йышне 25 процент, сыснасен йышне—22 проц. сурăхсемпе качакасен йышне—21 проц чухлĕ ӳстермелле.

13. Кашни фуражлă ĕнерен вăтамран 1.200 литртан кая мар сĕт суса илмелле, кашни сурăхран вăтамран 2,5 килограмм çăм касса илмелле, кашни 100 сурăхран 115-рен кая мар путек илмелле тата кашни сысна аминчен вăтамран—12 çăвăртан кая мар илсе çитĕнтермелле.

14. Обществăллă выльăх-чĕрлĕх валли апат-çимĕçсем çителĕклĕ таранах хатĕрлесе хумалла, 120.000 тоннăран кая мар силос хывса хăвармалла.

15. Çураки пуçланиччен механизаторла кадрсем 1.800 çын вĕрентсе хатĕрлемелле, кĕске вăхăтлăх курссем организацилесе, вĕсенче колхоз председателĕсене, счетовочĕсене, уйхир бригадисен бригадирĕсене тата выльăх-чĕрлĕх фермисен заведующийĕсене 4.500 çынна вĕрентсе кăлармалла, çавăн пекех тата звеньеводсене, пахча-çимĕç акса тăвас тĕлĕшпе ĕçлекенсене, яровизаторсене, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕш-

пе ĕçлекенсене тата колхозсен ытти тĕрлĕ кадрĕсене вĕрентессине йĕркелемелле.

Кăçалхи çул вăрçă вăхăтĕнчи вăйлă тырпула туса илессишĕн тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессине малалла ӳстерсе пырассишĕн районсем, МТС-сем, совхозсем, колхозсем, бригадăсем, звеносем тата колхозниксемпе колхозницăсем, МТС-семпе совхозсен работникĕсем, ялхуçалăх специалисчĕсем хушшинчи ăмăртăва анлăн сарса ярар.

Икĕ çыншăн, виçĕ çыншăн ĕçлĕпĕр хамăр çине илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртессишĕн пĕтĕм вăя хурăпăр.

**Партипе совет тата колхоз активĕн канашлăвĕ хушнипе обязательствăсем çине çаксем алă пуснă: Чарыков**—ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ, **Матвеев**—ЧАССР Совнаркомĕн председателĕ, **Андреева**—ЧАССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ, **Белков**—ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ, **Ахазов**—ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ, **Серов**—ЦК ВКП(б) çумĕнчи Парти Контроль Коммиссин Чăваш республикинчи Уполномоченнăйĕ, **Крылов**—ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ, **Репкин**—ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ, **Никитин**—ВКП(б) Чăваш обкомĕн секретарĕ, **Андреев**—ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ, **Кузьмин**—ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ, **Бобров**—ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ, **Белолипец-**

**кий**—ЧАССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарĕ, **Малов**—ЧАССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ, **Мартынов**—ВКП(б) Обкомĕн ялхуçалăх отделĕн заведующийĕ, **Чернов**—Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн Политсектор начальникĕ, **Евлампьев**—ЧАССР Совнарком председателĕн заместителĕ, **Романова**—ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ, **Михайлов П.**—ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн секретарĕ, **Коротков**—ВКП(б) Вăрнар райкомĕн секретарĕ, **Караушев**—ВКП(б) Шупашкар райкомĕн секретарĕ, **Михеев**—Елчĕк МТС политотделĕн начальникĕ, **Яшин**—Елчĕк МТС директорĕ, **Васянин**—Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ, **Скворцов**—Шăхасан райсовет исполкомĕн председателĕ, **Ширманова**—Пăрачкав районĕнчи Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз колхозници, **Гордеев**—Красноармейски районри „Янмурзино“ колхоз тимĕрçи, **Тюрина**—Кувакино районĕнчи „Ударник“ колхозри махорка енĕпе ĕçлекен звеньевой, **Драгункина**—Çĕрпӳ районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз доярки, **Балденкова**—Кувакино МТС-ĕнчи хĕрарăмсен трактор бригадин бригадирĕ, **Григорьева**—Сĕнтĕр районĕнчи „Красное Сормово“ колхозри пăрусене пăхакан, **Гордеева**—Елчĕк МТС трактористки, **Михайлов**—Çĕмĕрле МТС комбайнерĕ, **Смирнова**—ВЛКСМ Шупашкар райкомĕн секретарĕ, **Калинцев**—Чăвашсен ялхуçалăх институчĕн директорĕ.

---